25-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 6 ЮНКУН 4(6241) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Январěн 4-мěшěнче пирěн наступлени тăвакан войскăсем ЧЕРНЫШКОВСКИЙ хулине тата ЧЕРНЫШКОВ ятлă чугунçул станцине тытса илнě.

Чернышковский районěнче йышлă трофейсем тытса илнě, вěсем хушшинче 17 самолет, 2 миллион патрон, 500 пин авиабомба, çавăн пекех тата продовольстви çар пурлăхěсен склачěсем пур.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

Январěн 4-мěшěнче пирěн войскăсем татăклă атака тунă хыççăн НАЛЬЧИК хулине чугунçул станцине йышăнса илнě.

Январěн 5-мěшěнче пирěн войскăсем ПРОХЛАДНЫЙ хулипе чугунçул узелне, МАЙСКОЕ хулине тата КОТЛЯРЕВСКАЯ ятлă чугунçул узелне тытса илнě.

Вăйлă çапăçу хыççăн пирěн войскăсем МОРОЗОВСКИЙ хулипе чугунçул станцине тата ЦЫМЛЯНСКАЯ ятлă район центрне йышăнса илнě.

Трофейсем тытса илнě тата тытăнă илнě.

II.

Пирěн войскăсем Çурçěр Кавказра нимěç оккупанчěсене хирěç 1942 çулхи декабрěн 24-мěшěнчен пуçласа 1943 çулхи январěн 4-мěшě çитиччен çапăçса çакăн пек трофейсем тытса илнě: танксем — 150, орудисем — 109, пулеметсем — 268, винтовкăсем — 5.000 яхăн, танксене хирěç кěрешмелли минăсем — 59.000, патронсем—500.000 ытла, автомашинăсем — 253, боеприпассемпе продовольстви склачěсем — 15.

Çав вăхăт хушшинчех пěтерсе тăкнă: самолетсем — 18, танксем — 170, орудисем — 42, пулеметсем — 222, грузсемпе çар снаряженийě тиенě автомашинăсем — 390.

1942 çулхи декабрěн 24-мěшěнчен пуçласа 1943 çулхи январěн 4-мěшěнче çитиччен вăхăтра хушшинче противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 11.000 ытла салтакпа офицерě пěтнě.

СОВИНФОРМБЮРО.

ВЫРĂНТИ ПИЧЕТ ĚÇНЕ КУЛЛЕН ЕРТСЕ ПЫМАЛЛА

Пирěн çěршыван ирěклěхěшěн пыракан отечественнăй вăрçă большевикла пичет умне çěнě те пысăк задачăсем кăларса тăратрě. Партипе правительствăн боевой органě пулса тăрса, пичет [illegible] Хěрлě Çара пулăшма пěтěм халăха [illegible] фронтпа тыла тěреклетес тěлěшпе пирěн ырми-канми ěçлеме кирли çинчен, эпир пěтěм вăя хурса кěрешсен, нимěçсен фашистла войскисене пурпěрех поражени тўстересси çинчен хаçатсемпе журналсен ěççыннисене тăтăшах ăнлантарса памалла. Тăшмана çěнтерес шанчăка, ăна пěр шеллемесěр пěтерсе пырас кăмăла, курайманлăх кăмăлне вăйлатса пымалла. Çавăн пек ěнтě большевикла пичетěн вăрçă вăхăтěнчи тěп задачи.

Çак задачăна пурнăçлас енěпе пирěн пичет чылай пысăк ěçсем турě. Хаçатсен редакцийěсем хăйсен ěçне вăрçă вăхăчě ыйтнă пек уйрăхлатса, çěнетсе пычěç. Вăрçă вăхăтěнче пичет авторитечě татах та ўсрě, унăн массăсем хушшинчи влиянийě вăйланчě. Уйрăмах районри хаçатсем халě пысăк вырăн йышăнса тăраççě. Массăсемпе çывăхарах тăнине пула, вěсем районри е колхозри уйрăм примерсем тăрăх ěççыннисен массисене умра тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилеççě.

Анчах районри хаçатсен ěçне урăхлатса çěнетес тěлěшпе нумай тăрăшмалла-ха. Пирěн республикăри райхаçатсен ěçěнче халиччен пысăк çитменлěхсем пурри палăрать. Вěсем мěн пуррине çеç пичетлеççě, хăйсем пуçарулăх кăтартмаççě, нимěнле организациллě ěç те туса пымаççě. Хаçатсем чылайěшě революциллě сыхлăх çинчен çырма пăрахрěç, обществăллă пурлăха çаратакансене хирěç кěрешмеççě. Нимěç фашисчěсен тискер ěçěсем çинчен калакан материалсене сахал пичетлеççě. Çав вăхăтрах хаçат страницисене пысăк та шěвě статьясемпе тултараççě, хаçатри вырăнпа кирлě пек усă курма тăрăшмаççě.

Ку çеç те мар. Райхаçатсем колхозсемпе учрежденисен тата тěрлě организацисен ěçěнчи çитменлěхсене критиклес ěçе пачах çителěксěр туса пыраççě. Авторсен коллективěпе ěçлемеççě, çавна пула хăшпěр хаçатсенче корреспондентсен йышě сахалланса пырать. Партипе комсомол пурнăçě çинчен юлашки вăхăтра чылай хаçатсем пачах та çырмаççě. Çапла ěнтě, районсенчи хаçатсен ěçне урăхлатса çěнетес тěлěшпе нумай тăрăшмалла, нумай вăй хумалла пулать-ха.

Хаçатсен ěçěнчи çўлте асăннă çитменлěхсем мěнрен килеççě-ха, вěсене пěтерес тěлěшпе парти райкомěсем мěнле ěçлеççě?

Партин Центральный Комитечě кăтартса панă тăрăх, районри хаçат ěçěпе ВКП(б) райкомěн пěрремěш секретарě хăй тата куллен интересленмелле. Хаçата ертсе пырас теми вăл—хаçатăн кашни номерěпе интересленмеллине пěлтерет. Тўрех калас пулать, çакна вара парти райкомěсем тата вěсен секретарěсем час-часах манаççě. Вěсем хаçат ěçне пěтěмěшпех редактор çине хăвараççě, унăн ěçне кулленех интересленмеççě. [illegible] Шăмăршă районěнчи хаçат [illegible] анчах ВКП(б) райкомě унăн секретарě çакна асăрхамаççě. [illegible] Çěнтěр районěнчи хаçат редакторě Соловьев юлташ уйăхě-уйăхěпе райком уполномоченнăйě пулса пурăнать, райхаçата урăх çынсем алă пусса кăлараççě. ВКП(б) райкомěпе унăн секретарě çакна йěркеллě япала тесе шутлаççě, редактор вěсене уполномоченнăй тума кирлě пулас, хаçат кăларма мар. Кунта районри хаçата хаклама та, унпа усă курма та, ăна ертсе пыма та халиччен вěренсе çитмен-ха. Çавăнпа та редакци ěçěсем çинчен райкомра сўтсе-явмаççě, редакторпа калаçнă чухне час-часах «санăн хаçату» тесе калаççě, районри хаçат—редакторăн хаçачě мар, райкомпа райисполкомăн органě пулса тăнине манаççě.

Çак асăннă районсенче большевикла пичет мěнле пысăк вырăн йышăнса тăнине, ăна ертсе пырасси партипе совет организацисен чи пысăк та кирлě задачисенчен пěри пулса тăнине манаççě. Паллах ěнтě, çак пысăк кăлтăка халех пěтерес пулать, хаçатсене ертсе пырас ěçе тěпренех лайăхлатас пулать.

Районри хаçат партипе совет организацисен чи çывăх тата пултарулла помощникě пултăр тесен, ВКП(б) райкомěсемпе райсовет исполкомěсен хăйсен органне куллен ертсе пымалла, унăн ěçěпе куллен интересленмелле. Райхаçатăн ěç планěсене райкомра çирěплетес йěркене пур районсенче те ěçе кěртес пулать. Райком секретарěсен хаçатăн кашни номерне пăхса тухса унăн çитменлěхěсене кăтартса пама тăрăшмалла. Тěрěсрех каласан, парти райкомěн хăйěн хаçатне куллен контрольлесе тăмалла, унăн авторитетне çěклемелле. Çапла ěçлесен кăна районри хаçатсем лайăх пахалăхпа, пуян содержанипе тухса тăрěç, районри партипе совет организацисен пултарулла помощникěсем пулса тăрěç.

Кунта стена хаçачěсем çинчен те пěр-икě сăмах каласа хăвармалла. Хăшпěр районсенче стена хаçачěсене ертсе пырасси вăл—райхаçатăн ěçě пулса тăрать тесе шутлаççě иккен. Çавна пула парти райкомěсен пропагандăпа агитаци отделěсем районри стена хаçачěсене ертсе пырас тěлěшпе нимěн те тумаççě.

Пирěн партипе унăн Центральный Комитечě большевикла пичете, вăл шутрах вырăнти пичете те, яланах пысăк вырăна хурса хакланă. Отечественнăй вăрçă вăхăтěнче ун çине уйрăмах пысăк шанчăк хураççě, мěншěн тесен пичет—пирěн партин чи çивчě хěçпăшалě пулса тăрать. Парти райкомěсемпе пуçламěш парторганизацисен вырăнти пичете ертсе пырас ěçе татăклăнах лайăхлатас пулать, ăна конкретне тата куллен ертсе пырас пулать, ун умěнче тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшас пулать.

Совет Информаци Бюровěнчен

Январěн 4-мěшěнчи каçхи пěлтерў

Январěн 4-мěшěнче пирěн войскăсем **Дон** шывěн вăтаçěрěнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçěр Кавказра** малтанхи еннеллех наступлениллě çапăçусем туса пынă. Пирěн войскăсем **Чернышковский** хулине тата **Чернышков** ятлă чугунçул станцине тытса илнě.

* * *

Сталинград районěнче пирěн войскăсем противникпа артиллерирен хирě-хирěç персе тăнă. Пěр участокра пирěн артиллери темиçе дзота ишěлтерне, 2 орудие пěтерсе тăкнă тата противникăн пехотине икě рота таран сапаласа янă. Заводсен районěнче пирěн штурмлакан чаçсем тăшманăн укреплениййěсене пěтерсе пынă. Совет боецěсем, нимěçсен дзочěсемпе блиндажěсем патне пырса тухса, вěсене гарнизонěсемпе пěрлех сирпěнтересирпěнтере янă. Нимěçсен 200 салтакěпе офицерне ытла пěтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнě тата тыткăна илнě.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирěн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнě. Н-ски моторизованнăй часть нимěç войскисен группин флангěсене пырса тухнă та ăна хăюллăн атакăласа мелле позицисенчен хěссе кăларнě. Гитлеровецсем каялла чакнă чухне 2 танк, 14 оруди, 9 автомашина тата хěçпăшалсемпе боеприпассем нумай пăрахса хăварнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Дон шывěн вăтаçěрěнчи районра пирěн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пирěн войскăсем Чернышковский хулине тата Чернышков станцине йышăнса илнě. Йышлă трофейăсем тытса илнě: 2 миллион снаряд, 500 пин авиабомба, 17 самолет тата продовольствипе çар пурлăхěн йышлă склачěсене тытса илнě. Пирěн чаçсем противникăн çавăрса илнě гарнизонěсене хěснěçемěн хěссе пыраççě. Нимěçсем хăйсен çавăрса илнě пěр гарнизонне пулăшма йышлă вăйсем янă. Противникăн пехотипе танкěсем темиçе хут та контратака тунă, анчах та пирěн артиллерин вут-çулăмне чăтаймасăр каялла кайнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн 1.000 вилли ытла выртса юлнă. Нимěçсен 24 танкне персе çěмěрнě е çунтарса янă.

* * *

Центральнăй фронтра пирěн войскăсен пěр пайě наступлениллě çапăçусем туса пынă, ытти участоксенчи войскăсем хăйсен позицийěсене тěреклетнě. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецěсем халăх пурăнакан пункта вăркăнса кěрсе кайнă та халě унта урамсенче çапăçаççě. 2 оруди, 8 пулемет тата 3 миномет тытса илнě.

Ржевран хěвеланăçнерехри районра противник пехотин вак групписен темиçе атакине сирсе янă.

* * *

Çурçěр Кавказра пирěн войскăсем наступлени туса пынă. Халăх пурăнакан пěр пысăк пунктшăн пынă çапăçусенче тăшманăн 300 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Пěр танк, 5 автомашина тата 20 станковăй пулемет тытса илнě. Халăх пурăнакан тепěр пунктăн районěнче совет боецěсем боеприпассен 2 складне, продовольстви складне, 43 автомашина, 6 пин снаряд, 500 мина, 4 радиостанци тата ытти тěрлě çар пурлăхěсем тытса илнě.

* * *

Витебск облаçěнче кěрешекен партизансен отрячě противникăн 8 эшелонне ўпěнтерсе янă. Крушенисене пула 92 вагон, 16 цистерна тата 48 платформа çěмěрěлнě. Çав отрядри партизансем пěр уйăх хушши çапăçса 3 танка персе çěмěрнě, 52 автомашинăна çунтарса янă, шоссе çулěсем çинчи 10 кěпере сирпěнтерсе янă тата çыхăнăвăн телефонпа телеграф линине 17 километр тăршшě касса илнě. Витебск облаçěнчи партизансен тепěр отрячě шоссе çулěсем çинче засадăсенчен персе 200 гитлеровеца ытла вěлернě.

* * *

Январěн 3-мěшěнче Гитлерăн главнăй ставки çапла пěлтернě: «Германи чаçěсем çěнçула Терек районěнче вăйлă атакăсем тунипе пуçласа янă. Большевиксен пур атакисене те пирěн чаçсем хирěç сирсе янă». Гитлерла пуçлăхсен çав мухтанчăк сăмахěсем чăнлăхпа пěрре те килěшсе тăмаççě. 1943-мěш çулхи çěнě çула нимěç войскисем нумай фронтсенче, çав шутра Терек районěнче те, васкаса каялла чакнипе пуçланă. Совет войскисем çěнě çулăн, 1943 çулăн малтанхи кунěсенчех Моздок, Малгобек хулисене тата халăх пурăнакан ытти пунктсене йышăнса илчěç. Гитлеровецсем Хěрлě Çар пыра-пыра çапнипе халăх пурăнакан пунктсене пěрин хыççăн теприне хăварса пырса хěвеланăçнелле чакнă вăхăтра нимěç войскисем тěнчере çук «вăйлă атакисем» çинчен калаçни кулăшла мар-и-ха вăл!

Январěн 3-мěшěнче Германин информаци бюровě Гитлерăн главнăй ставкинчен илсе пěлтерў пичетлесе кăларнă. Çав пěлтерўре çапла каланă: «Калугăран хěвеланăçнерехре наступлениллě операцисем туса пырса, противникăн пěр батальонне тата 95 огневой точкипе дзотне пěтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур». Çак пěлтерў те вăл гитлеровецсен яланхи суя сăмахě çеç пулса тăрать. Калуга тахçанах ěнтě Совет войскисен тылěнче ларать. Калугăран хěвеланăçнерехре (ун çинчен Совинформбюро пěлтернěччě) ěлěкхи пекех лăпкă тăрать. Унта юлашки кунсенче нимěçсем те, совет войскисем те нимěнле операцисем те туман.

Германи çарě 1943-мěш çула каялла чакнипе пуçласа ячě. Гитлерăн ставки вара — çěнěрен хытă суйнипе пуçласа ячě. Гитлерăн ставки ухмахла тата суйса пěлтернисем гитлерла пуçлăхсене хăйсене пырса çапаççě, вěсене тěнче кулли туса хураççě. Тěрěссипех ěнтě—«Кěсре мухтаннă, пěр лав чўлмеке çěмěртěм, тенě».

Январěн 5-мěшěнчи ирхи пěлтерў

Январěн 5-мěшě ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем **Дон** шывěн вăтаçěрěнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçěр Кавказра** малтанхи еннеллех наступлениллě çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинград районěнче пирěн войскăсем противник çине персе тăнă тата разведка тунă. Заводсен районěнче пирěн подразделенисем çěрле гитлеровецсем тăракан вырăна кěрсе кайнă та темиçе çурта тытса илнě. Сталинградран çурçěр-хěвеланăçнерехре совет артиллерисчěсем нимěçсен 7 дзочěпе блиндажне ишěлтернě, боеприпассен складне сирпěнтерсе янă тата тăшманăн пěр рота пехотине сапаласа янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирěн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Пěр участокра пирěн артиллеристсем самолетсем лармалли площадкăра нимěçсен 11 самолетне пěтерсе тăкнă, артиллерин батарейине тата минометсен батарейине пусарса лартнă. Тепěр участокра нимěçсем контратака тунă, анчах та пулеметсемпе тата пăшалсемпе харăссăн пеме тытăнсан, нимěн йěркисěр хăйсен малтанхи позицийěсем патне чакнă, çапăçу хирěнче вěсен йышлă виллисем выртса юлнă.

* * *

Дон шывěн вăтаçěрěнчи районра пирěн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пěр участокра противникăн фронта тин çеç пырса çитнě çěнě вăйěсемпе çапăçу пуçланса кайнă. Нимěçсем малтан пирěн подразделенисене каялла чакарнă. Вара çапăçăва совет танкисчěсем кěрсе кайнă. Противника флангран пырса çапса, пирěн танксем гитлеровецсен çапăçу речěсене арпаштарса янă та вěсене пысăк çухатусем тўстерсе каялла чакарнă. Тăшманăн 49 танкне персе çěмěрнě е çунтарса янă, нимěçсен темиçе çěр салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра пирěн боецсем каялла чакакан противника хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě.

* * *

Центральнăй фронтра, Великие Луки хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре, Н-ски чаçăн боецěсем, минăсем хунă вырăнсем урлă каçса, тăшманăн оборонин вăйлă тěреклетнě узелне çěмěрсе кěрсе кайнă. Хаярран çапăçнă хыççăн противника çав рубежран хăваласа янă. 9 пулемет, 4 миномет, радиостанци тата боеприпассен складне тытса илнě.

Ржевран хěвеланăçнерехри районра пирěн чаçсем противникăн вак групписен атакисене сирсе янă. Совет разведчикěсем çěрле нимěçсен тылне кěрсе кайнă та 30 гитлеровеца пěтерсе тăкнă тата темиçе дзота сирпěнтерсе янă.

* * *

Çурçěр Кавказра пирěн войскăсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Пěр пысăк ял районěнче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнě. Нимěçсем контратакăна пехотăпа танксен йышлă вăйěсене кěртсе янă. Пирěн пехотăпа пěрле пынă артиллеристсем тăшманăн 8 танкне персе çěмěрнě. Штык вěççěн пуçланса кайнă çапăçура совет боецěсем штыкпа тата прикладпа çапăçса гитлеровецсене аркатса тăкнă та çав яла йышăнса илнě. Çапăçу хирěнче тăшманăн 330 вилли выртса юлнă. Малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, Моздок хулине илнě чухне пирěн пěр часть кăна нимěçсен икě батальонне аркатса тăкнă, 15 танк, 8 оруди, куçса çўрекен автомастерской, боеприпассен 2 пысăк складне тата мотоциклсемпе велосипедсем нумай тытса илнě.

* * *

Ленинград фронтěнче пирěн снайперсем виçě кун хушшинче 499 гитлеровеца вěлернě. Пирěн артиллери тăшманăн 45 дзочěпе блиндажне ишěлтернě тата боеприпассен 2 складне сирпěнтерсе янă.

Орел облаçěнчи партизансен ушкăнě нимěçсен çар эшелонне ўпěнтерсе янă. Зенитнăй орудисем тиенě 7 платформа, танксем тиенě 10 платформа тата салтаксем ларса пыракан 2 вагон çěмěрěлнě. Орел облаçěнче кěрешекен партизансен тепěр отрячě çар эшелонне крушени тунă. Нимěçсен 200 салтакпа офицер таран пěтнě.

* * *

Котельниково районěнче нимěçсен 6-мěш танковăй дивизийěнчи унтер-офицер Эмиль К. Хěрлě Çар енне каçнă. Çав унтер-офицер çапла каласа панă: «Пирěн дивизи юлашки вăхăтченех Францире тăчě. Вырăссем Сталинград районěнче наступлени тума пуçласан, нимěçсен нумай чаçěсене Францирен хěвелтухăçне илсе кайрěç. 1942-мěш çулхи ноябрьте Россиăна 337-мěш дивизие ячěç. Çав дивизи 1940-мěш çулхи мартран пуçласах Францире тăнă. Çав дивизи хыççăн вара васкасах пирěн танковăй дивизие те ячěç. Халě ěнтě Францире, «СС» дивизийěсене шутламасассăн, çар ěçне вěренмен салтаксене пухса тунă чаçсем кăна тăрса юлнă. Сăмахран, резерври батальонсенче, хăйсен çěршывěнче гарнизон службинче е тылри чаçсенче нестроевой службăра тăма çеç юрăхлă салтаксем нумай».

* * *

Çěнě çул ыран тенě чух çěрле Бельги патриочěсем Брюссельре темиçе нимěç оккупантне вěлернě. Нимěç офицерěсем çěнě çула ирттерме пухăннă кафене темиçе граната пăрахнă. Гитлеровецсем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Боевой самолетсен Чăваш республикинчи Промкоопераци ячěпе тăракан звенине тăвар!

Октябрьски районри „Труд“ промысла артелěн членěсем Чăваш республикинчи промысла кооперацин работникěсемпе работницисене чěнсе калани

Отечественнăй аслă вăрçăн хирěсенче совет государствин кун-çулне татса параççě. Кěрешў социализмлă тăван çěршывăн пурнăçěпе вилěмне, ССР Союзěнчи халăхсен пурнăçěпе вилěмне тата совет халăхěсем малалла ирěклě пурăнассине е асаплă чуралăха кěрсе ўкессине татса парать.

Совет халăхě Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклачěпе приказě çине боевой çěнě ěçсем тунипе ответлерě.

Сталин юлташ пирěн Чăваш республикинчи колхозниксемпе трактористсене саламланипе тата тав тунипе хавхаланса, эпир, Октябрьски районри Караньялěнчи «Труд» промартель членěсем, фронта пулăшассине вăйлатас тесе боевой самолетсен Чăваш республикинчи Промкоопераци ячěпе тăракан звенине тума укça пухма шутларăмăр. Çак ěç валли артель членěсене валеçсе памалли 1942 çулти тупăшран эпир пěтěмпе 20.000 тенкě хыврăмăр. Кунсăр пуçне артель членěсем хушшинче чылай укça пухрăмăр.

Чăваш республикинчи Промысла кооперацин мěнпур работникěсене пирěн примера йышăнса илсе, боевой самолетсен Промкоопераци ячěпе тăракан самолетсен звенине тума укça пухас ěçе пěр харăссăн хутшăнма чěнетпěр.

Промысла кооперацин работникěсемпе работницисем! Нимěç ирсěрěсене совет çыннисенчен мăшкăллама, чěрěк ěмěр каярах пирěн аттесемпе пиччесем хăйсен юнěпе çěнтерсе илнě Совет çěрне ирсěрлеме памастпăр! Хамăрăн пархатарлă ěçпе, хамăрăн перекетлесе усранă укçа-тенкěпе мухтавлă Хěрлě Çара наступлениллě çапăçусене малалла татах та ăнăçлăрах туса пыма пулăшар! Хамăрăн укçа-тенкěпе боевой самолетсен Промкоопераци ячěпе тăракан звенине тăвар!

Нимěç оккупанчěсене—вилěм!

Сывă пултăр пирěн социализмлă Тăван çěршыв!

Сывă пултăр пирěн мухтавлă Хěрлě Çар!

Сывă пултăр пирěн çулпуçăмăр тата аслă полководец юратнă Сталин!

Рабочисемпе работницăсен пěрлехи пухăвě хушнипе —

Артель правленийěн председателě МОКЕЕВ; ВЛКСМ организацийěн секретарě ЧУБАКОВА; Бригадирсем: КУЗЬМИНА, ОСИПОВА, ВЛАДИМИРОВА, ПЕТРОВ, ШАПОШНИКОВ;

Стахановецсем: АНДРЕЕВ, СОКОЛОВ, СЕМЕНОВА, ЖУРИКОВА, НИКИТИНА, ТОРИНА, ЯКИМОВА, ФЕДОРОВА, ЯРУКИН, ГРИГОРЬЕВ, МЕНЬШИКОВ, БОГОЛЮБОВА, МАТРОСОВ, КУПЦОВ; Культработница КУЗНЕЦОВА; Старши бухгалтер МУРАВЬЕВ; Тир-сăран завочěн техникě ЯШУРКИН.

Патриотизмлă туйăмпа

Чкаловски районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухас ěçе патриотизмлă вăйлă туйăмпа туса пыраççě. «РОКК» колхоз çамрăкěсен пуçарăвне хапăл туса кěтсе илсе, вěсем çак ěç валли темиçе пиншер тенкě укçа хываççě.

Чкаловски МТС-ěнчи çамрăк трактористсемпе комбайнерсем боевой самолетсен эскадрильине тума пěр кун хушшинче 119.500 тенкě укçа пухнă. 12-мěш трактор бригадин бригадирě Григорий Люкин 10.000 тенкě хывнă. Ун хыççăн МТС-ри комсомолецсемпе комсомолкăсем трактористка А. Борисова юлташ 4.000 тенкě, тракторист Шекиров юлташ — 3.000 тенкě, трактористка Воронцова юлташ — 2.000 тенкě панă.

ВЛКСМ райкомě тата комсомолăн районри пуçламěш организацийěсем боевой самолетсен эскадрильине тума укça пухас ěçе большевикла ертсе пыраççě. Ку ěç МТС-ра, колхоз фермисенче, учрежденисемпе шкулсенче, призыв пунктěнче пысăк çěкленўпе пулса иртет. Хěрлě Çар ретне тăма призыв комиссине пынă çамрăксем çак ěç валли 38.900 тенкě пухса хывнă. Призывниксем Николаев, Шаридзянов юлташсем кашниех 5.000-шер тенкě панă.

Ешер «Красное Знамя» колхоз çамрăкěсем пухура самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укça пухасси çинчен сўтсе-явнă. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем шучне унта 60 çулхи мучи Н. Теников юлташ пынă.

— Эпě кунта çамрăксен вăйěпе боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тăвас хыпара илтсе килтěм. Çавăнпа çак ěçе мана та хутшăнма ирěк парасса шанатăп. Эпě çак ěç валли 50.000 тенкě паратăп, çакă вăл манăн колхозри пуян пурнăçпа пурăнма пуçланă çулсенче перекетлесе хăварнă укçа. Çěршыв хăрушă кунсене пурăнса ирттернě вăхăтра эпě укçама шеллесе тăмастăп, хамăрăн паттăр летчиксене валли боевой самолетсем тунă çěре паратăп, — терě вăл пухура.

Çул тěлěшěнчен ватă, анчах çамрăк чěреллě патриот çак ěç валли пуху хыççăнах 50.000 тенкě кăларса хучě. Ун хыççăн колхоз çамрăкěсем кашниех 10.000-шер тенкě укçа пачěç. ВЛКСМ организацин секретарě Н. Пирогов юлташ 15.000 тенкě пачě. Çапла вара «Красное Знамя» колхоз çамрăкěсем пěр кун хушшинче 107.000 тенкě пухрěç.

Республикăри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем! Боевой самолетсен эскадрильине тума укça пухас ěçре Чкаловски районри комсомолецсемпе çамрăксен паха примерне йышăнса илěр.

Г. ПЕТРУХИН.
ВЛКСМ Обкомěн секретарě.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ

СĔНТĔР. Çак кунсенче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху пĕр ыйту — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен ВКП(б) Сĕнтĕр райком секретарĕн Г. Гусев юлташăн докладне итлесе сÿтсе-яврĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, агротехникăна тĕрĕс пурнăçласа пырса, районри малта пыракан «13 лет РККА» «Броневик», «Свобода» колхозсем иртнĕ çул гектартан вăтам шутпа 18—20-шер центнер тырă туса илчĕç. «Красное Сормово», «Ядро» тата Яков Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе чаплă çитĕнÿсем турĕç.

Докладчик тата прение тухса калакансем 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра ÿсĕмсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те пулнине палăртрĕç. «Малалла» колхоз, сăмахран, иртнĕ çулта çуракине начар хатĕрлесе кĕтсе илнĕ. Колхоз руководителĕсем (колхоз председателĕ Н. Мартынов юлташ) çуракине тухиччен вăрлăх çинчен шутламан та, çураки пуçлансан çеç Чкалов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхлăх тырă улăштарнă. «Красный Октябрь» колхозра вăрлăха хĕллехи вăхăтра лабораторире тĕрĕслеттермен пирки юрăхсăр вăрлăх акнă, çавна пула хăшпĕр участоксенче тырă сайра шăтнă.

Иртнĕ çулхи йăнăшсене хăшпĕр колхозсем кăçал та тăваççĕ. Районри 101 колхозран пĕр колхоз та паянхи кун тĕлне вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрлемен, акмалли вăрлăхăн 10 процентне кăна сортланă. Вăрлăх сортлас ĕçе хăвăртлатма районра пур майсем те пур. Районри колхозсенче 32 триер. Апла пулин те вĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ, тăваттăшĕ халĕ те юсавсăр лараççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунистка Иванова юлташ) клевер вăрлăхне ытти çĕртен илес шухăш-кăмăлпа пурăнать пулас. Вăл паянхи кунччен вăрлăхлăх клевере çапса пуçтарман. «Заря», «Новый путь», «Родник», «Хĕрлĕ паттăр», Калинин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче паянхи кунччен 364 гектар çинчи тырă çапăнмасăр тăрать.

Прение 17 çын тухса каларĕç. Вĕсем районри колхозсем çуракине çителĕксĕр хатĕрленнине, районри çĕрĕç пайĕ—çуракине хатĕрленес ĕçе, вăрман хатĕрлекен организацисем — вăрман хатĕрлес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕç, вĕсен руководителĕсене хытă критиклерĕç.

Коммунистсем ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçласшăн вăйлăн кĕрешме пулчĕç, пуху вăл решенисене пурнăça кĕртмелли мероприятисене палăртса хăварчĕ.

М. ИСАЕВ.

„Хĕрлĕ Çара комсомолец пулса каяс тетĕп"

ИШЛЕЙ, январĕн 4-мĕшĕ. **(Телефонпа).** 1925 çулта çуралнă çамрăксене Хĕрлĕ Çара илес тĕлĕшпе комисси ĕçленĕ вăхăтра райвоенкомат çумĕнче комсомолăн вăхăтлăх организацине турăмăр. Çак юлашки ик-виçĕ кун хушшинче вăл организацине 12 çамрăк хутшăнчĕ. Ишлей Покровски колхозăн членĕ Андрей Монин хăйĕн заявленийĕнче: «Хĕрлĕ Çар ретне эпĕ комсомолец пулса каяс тетĕп», тесе çырать. Вăл колхозра тăрăшса ĕçленĕ, кăçал 200 ĕçкунĕ ытла тунă. Ленинла—Сталинла комсомол ретне тăрса, вăл Хĕрлĕ Çарта дисциплинăллă боец пулма сăмах пачĕ. Çавăн пекех «Красный танк» колхоз членĕ Моисей Павлов та заявленипе Хĕрлĕ Çара комсомолец пулса кайма кăмăл туни çинчен пĕлтерет.

Комсомолăн райвоенкомат çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Григорьев юлташ) ВЛКСМ ретне кĕме кăмăл тунă çамрăксен заявленийĕсене çийĕнчех пăхса тухать. ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ пуçламĕш организаци решенине тепĕр кунах пăхса тухса, 12 призывника комсомол ретне илчĕ, вĕсене комсомол билечĕсем пачĕ.

А. СЕРЕБРЯКОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатмалла

Республикăри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пиншер мăшăр çăматă, кĕрĕк пиншак, алшиш-носкисем, мулаххай тата ытти ăшă япаласем пухрĕç. Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен Хĕрлĕ Чутай районĕнчи комисси уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Унта январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăшă тумтирсем хатĕрлеме 648 килограмм çăм, 1.387 тир пухнă. Кунсăр пуçне 301 мăшăр çăматă, 248 кĕрĕк пиншак, 161 мăшăр алса, 129 мулаххай, 127 мăшăр çăм алшишсемпе перчаткăсем пухнă. Вăрмар районĕнчи ĕçсыннисем те 450 килограмм çăм, 950 тир, 136 кĕрĕк пиншак, 147 мăшăр çăматă, 105 мăшăр алса, 104 мулаххай, çăм алшишсемпе перчаткăсем 220 мăшăр пухнă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç Елчĕк, Тăвай, Шупашкар, Чкаловски районсенче те аван пырать.

Анчах Вăрнар, Çĕмĕрле, Первомайски, Элĕк, Йĕпреç районĕсем ăшă тумтирсем пухас тата пухнă тирсемпе çăмран ăшă тумтирсем хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Вăрнар районĕнче пĕр кĕрĕк пиншак та хатĕрлемен, çăматă та 6 мăшăр çеç пухнă. Çавăн пекех Çĕмĕрле районĕнче те çăматă 7 мăшăр, кĕрĕк пиншак 24 çеç пухнă. Элĕк, Первомайски, Йĕпреç районĕсем çăматăпа кĕрĕк пиншаксем пухас ĕçе питех те çителĕксĕр туса пыраççĕ. Асăннă районсенчи комиссисен тата вĕсен руководителĕсен ку ĕç çине тимсĕррĕн пăхассине халех пĕтермелле.

Элĕк, Йĕпреç, Советски тата ытти хăшпĕр районсенче фронтри юлташсене хĕл вăхăтĕнче питĕ кирлĕ ăшă япаласем — кĕрĕк алсасем, çăм алшишсем, çăм носкисемпе чăлхасем, ваткăллă пиншаксемпе брюкисем, ăшă курткăсем пухас ĕçе питех те сÿрĕк туса пыраççĕ. Элĕк районĕнче, сăмахран, пĕтĕмпе те 12 кĕрĕк пиншак çеç тата 2 кĕрĕк алса çеç пухнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çăм чăлхасем пухас ĕçе Красноармейски, Шупашкар, Тăвай, Етĕрне тата Çĕмĕрле районĕсенче çеç тытăннă. Ытти районсенче вара ку ĕç пачах манăçа юлнă темелле. Çăм чăлхасем, çăм алшишсемпе носкисем хатĕрлес ĕçре колхоз хĕрачисем пуçарулăх кăтартма тивĕç. ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем кашни комсомолкăпа союзра тăман хĕрача умне çакăн пек задача лартмалла: кашни хĕрача хамăрăн мухтавлă воин валли çăм чăлха е носкипе алшиш çыхса патăр. Комсомол организацисен ку ĕçе куллен, оперативно ертсе пымалла.

Выранти удобренисене хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх

Уйхире кăçал тислĕк нумайрах кăларар

ИШЛЕЙ, январĕн 5-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таран тырпул, техникăллă культурăсем туса парасси хамăрăн уйхирсене нумайрах тислĕк, минераллă удобренисем кăларса çемçетнинчен килет.

Районри чылай колхозсем выранти удобренисем хатĕрлесе уя кăларас ĕçе пысăк активлăхпа тытăнчĕç. Халь пыракан уйăхлăхра колхозсем çуракине тĕплĕн хатĕрленес лозунгпа ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче «Активист» колхоз хăйĕн уйĕсене 1.600 лав тислĕк кăларчĕ, 20 гектар çинче юр тытрĕ. Кунсăр пуçне тата 30 центнер кĕл пухрĕ. Андреев ячĕпе тăракан, «Верный путь», «11 лет Чувашии» колхозсем те çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ку колхозсем юлашки кунсенче уя 500—600-шер лав тислĕк кăларнă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай пухнă, плугсемпе сÿресене пĕтĕмпех юсанă.

Выранти удобренисем пухса уя кăларас ĕçе пур колхозсенче те анлăн туса пымалла. Уя тислĕк кăлармалли хĕллехи задание кашни колхозăн пурнăçламалла.

И. АНТОНОВ.

Гектартан 120 пăт тырă илессишĕн

СĔНТĔРВĂРРИ. Анат Макаçри «Октябрь» колхоз 1942 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 13-шер центнер тырпул туса илчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çакă вăл пачах та çителĕксĕр. Колхозниксем 1943 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 120-шер пăт тырпул туса илессишĕн кĕрешме тухрĕç. Выранти удобренисем хатĕрлесе уя турттармалли уйăхлăха хутшăнчĕç. Паянхи куна колхоз хăйĕн уйĕсене 600 лав тислĕк, 350 лав торф кăларнă, 40 центнер минераллă удобрени турттарса килсе типĕ вырăна пуçтарса хунă. Колхоз çамрăкĕсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуçтараççĕ. Çак ик-виçĕ кун хушшинче вĕсем 20 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Вăйлă тырпулшăн

КАЛИНИНО. 1943 çулта иртнĕ çултинчен те тухăçлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешсе, районри колхозсем çуракине тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Выранти удобренисем пухса хатĕрлемелли уйăхлăха нумай колхозсем активлăн хутшăнчĕç.

Тури Карачурри «Ленин çулĕпе» колхоз членĕсем çак кунсенче уя 800 лав тислĕк кăларчĕç. Тислĕк турттарма ятарласа бригада тунă. Выльăх-чĕрлĕх фермисемпе лашасен витинчен тислĕке пухсах тăраççĕ, ăна çийĕнчех уя кăларса купаласа хураççĕ. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухас ĕç те колхозра аван пулса пырать. Ку тĕлĕшпе çамрăк ачасем хастарлăн ĕçлеççĕ.

К. ТИМОФЕЕВ.

Уйăхлăхăн малтанхи кунĕсенче

СĔНТĔРВĂРРИ. Йĕрĕхçырми-Рункăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленет. Çитес çуракинче акмалли вăрлăхсене уйăрса хунă, уйăрнă вăрлăхсен шутĕнчен 109 центнерне триерпа сортланă. Выранти удобренисем пухса уя кăлармалли уйăхлăха хутшăнса колхозниксем уя 300 лав тислĕк кăларчĕç, 20 центнер кĕл пухнă, 200 килограмм кали тăварĕ турттарса килнĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмах çамрăксем хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем куллен уя 10—15-шер лав тислĕк кăлараççĕ.

Юртакасси ялсоветĕнчи «Моряк» колхоз та çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Колхозниксем 70 гектар çинче юр тытса хăварнă, 26 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 300 килограмм кĕл пухнă, уя 500 лав тислĕк кăларнă.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçĕн иртнĕ çулăн иккĕмĕш çурринчи итогĕсем

Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарначĕ чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçĕн 1942 çулăн иккĕмĕш çурринчи итогĕсене тунă. Çав тапхăрта чугунçул транспортне вутă тăратмалли задание пирĕн республика хатĕрлессипе—111,8 процент, турттарассине — 103 процент, тиесе ăсатассипе—101 процент тултарнă.

Пирĕн вăрман хатĕрлекен организацисем декабрь уйăхĕнче уйрăмах тухăçлăн ĕçленĕ. Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тума хатĕрленсе, декабрьти задание хатĕрлес енĕпе 433 процент, турттарас енĕпе 145,7 процент тултарнă; вутта, ноябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 32.735 кубометр ытларах турттарнă.

Иккĕмĕш çурçулта вутă хатĕрлемелли тата турттармалли задание республикăри вăрман хатĕрлекен 11 предприятирен тăххăрĕшĕ (Буинскри заводпа Кирери пунктсăр пуçне) ăнăçлăн тултарнă. Уйрăмах лайăх тĕслĕхсем Вăрнарпа Йĕпреç леспромхозĕсем кăтартнă. Вăрнар леспромхозĕ, сăмахран, задание хатĕрлессипе—130 процент, турттарассипе тата тиесе ăсатассипе — 128 процент тултарнă.

Республикăри вăрман ĕçне хутшăнакан 27 районран задание хатĕрлес тата турттарас енĕсемпе те 13 район хатĕрлессипе уйрăмăн 20 район, турттарассипе уйрăмăн 11 район тултарнă. Ĕçĕн чи лайăх результачĕсене Йĕпреç, Калинински, Вăрнар, Вăрмар тата Ишлей районĕсем кăтартнă. Вĕсем хăйсен заданийĕсене чылай ирттерсе тултарнă.

Анчах республикăра иртнĕ çулăн иккĕмĕш çурринче вăрман хатĕрлевне сÿрĕк хутшăннă, чугунçул транспортне вутă тăратмалли задание тултарайман районсем те пулчĕç. Çавăн пек юлса пыракан районсенчен Тăвай, Çĕрпÿ тата Етĕрне районĕсене палăртмалла. Вĕсем вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ памасăр, чугунçул транспортне вутă тăратас тĕлĕшпе çĕршывпа фронт умĕнче парăма кĕчĕç.

1942 çул иртрĕ, 1943 çулăн пĕррĕмĕш кварталĕ пуçланчĕ. Çак квартал — вăрманти ĕçсен чи хĕрÿ вăхăчĕ. Пирĕн вăрман хатĕрлекен предприятисен кăçалхи хĕлре сахал мар вутă хатĕрлемелле. Оборонăн Государственный Комитечĕн çĕнĕ заданине тултарас тесен, уйрăм предприятисемпе районсем юлса пынине пĕтермелле, вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхне ÿстермелле, задание кашни предприяти, кашни район тăрăх тултарса пымалла, нормăна кашни рабочи тултарассишĕн кĕрешмелле.

ЛЕСНИЧЕСТВО ИРТНĔ ÇУЛХИ ПЛАНСЕНЕ ĂНĂÇЛĂН ВĔÇЛЕРĔ

КАЛИНИНО. Çĕршывпа фронт ыйтнине тивĕçтерессишĕн ĕçлесе, Калининăри лесничествăн коллективĕ иртнĕ çулта паллă çитĕнÿсем турĕ. Коллектив тĕрлĕрен продукци туса кăлармалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Сăмахран, йĕлтĕрсем туса кăлармалли плана 120 процент, пĕкĕ авмалли плана — 175 процент, урапа хатĕрĕсем тумаллине — 200 процент, çуна хатĕрĕсем тумаллине — 700 процент тултарчĕ.

Лесничествăра ĕçлекенсенчен чылайĕшĕсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Кадровăй рабочисем П. Михайлов, Н. Андреев юлташсем куллен 3 мăшăр йĕлтĕр тăвас вырăнне 6—7 мăшăр тăваççĕ. Рабочи М. Карягин юлташ пĕкĕ авмалли нормăна тăтăшах ирттерсе тултарать. Çав вăхăтрах вĕсем ĕçе çăмăллатмалли, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсем шыраççĕ. Михайловпа Андреев юлташсем çуна тупанĕсем авмалли çĕнĕ станок тăваççĕ. Карягин юлташ пĕкĕ авмалли çĕнĕ станок туса, унпа ĕçleме пуçларĕ.

Лесничествăра чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксем те хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. «Партизан», «Броневик», «Трактор» колхозсенчен пынă колхозниксем нормăпа 240-шер кубометр вутă хатĕрлес вырăнне, 400—500-шер кубометр хатĕрленĕ.

Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тăвассишĕн кĕрешсе, лесничество коллективĕ планран ирттерсе 1.000 кубометр вутă хатĕрлерĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Вăрман ĕçĕнчи стахановецсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозри хĕрачасем Иустиния Митрофановăпа Екатерина Самуйлова тата «Коммунар» колхоз членĕ Иван Ченакин 4 уйăх ытла ĕнтĕ Алтышево вăрман участокĕнче чугунçул валли вутă хатĕрлеççĕ. Вĕсем виççĕшĕ пĕр бригадăра ĕçлеççĕ. Çак виçĕ çамрăкран тăракан бригада вутă касса хатĕрлес ĕçре пример кăтартать. Бригада хăйĕн ĕç нормине кашни кун 150 процент тултарать. Ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн бригадира Ченакин юлташа 3 хут, бригада членĕсене Митрофановăпа Самуйлова юлташсене 2-шер хут премиленĕ.

Премисем илнĕ хыççăн вĕсем татах та тухăçлăрах ĕçleме пулчĕç.

Н. ВИНИК.

Нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ

СĔНТĔР. Иртнĕ уйăхсенчи социализмлă ăмăрту итогĕсем тăрăх Чăваш АССР Совнаркомĕ пирĕн артеле лайăх енĕпе палăртрĕ. Ăмăртури çитĕнÿсене çирĕплетсе хăварма тăрăшса, артель членĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Стахановецсем Г. Степанов, В. Васильев, Ф. Горбунов юлташсем нормăна 2 хут ирттерсе тултараççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем кашнийĕ виçшер çынна çĕвĕç ĕçне вĕрентеççĕ. Артельре çавăн пек пурĕ 13 çынна ĕçе вĕрентеççĕ.

МЕШКОВ,
Шушкарти «Тĕрлекен» артель правленийĕн председателĕ.

—⊙—

КОЛХОЗ УСТАВНЕ ПĂСАÇÇĔ

Юпсарти Молотов ячĕпе тăракан колхозра (Куславкка районĕ) хăшпĕр çынсем колхоз уставне пăхăнмаççĕ. Колхоз председателĕ Бояров юлташ кирлĕ пек ертсе пыманнине пула, авăн çапасси кунран кун юлса пырать. 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Клавдия Порфирьева колхозниксене авăн çапма чĕнес вырăнне хăй ĕçрен пăрăнса çÿрет. Декабрĕн 11-мĕшĕнче вăл старши конюх пулса ĕçлекен Мария Демьяновăпа пĕрле вăрмана вутă турттарма тухса кайнă. Çак кун вара авăн çапма мĕнпурĕ те 6 колхозница çеç тухнă. Бригадир хăйшĕн ытларах тăрăшнипе колхозницăсем кăмăлсăр пулнă. Старши конюх хăйĕн ĕçне пăрахса кайнине пула вăл кун 1-мĕш бригадăри лашасем кунĕпех апатсăр тăнă.

Çакăншăн колхозниксем аслă пухура Порфирьевăна бригадиртан, Демьяновăна старши конюхран кăларма йышăнчĕç. Анчах та колхоз правленийĕ колхозниксен пухăвĕ йышăннине халĕ те пурнăçламан-ха.

Вăхăтра апат парса шăварса тăман пирки лашасем начарланса кайнă. Каçхине пĕрре апат параççĕ те тепĕр кунне лашасем кăнтăрлачченех выçă тăраççĕ. Выльăхсен апатне расходласа пынине учета илмеççĕ. Вăл аякка та саланать.

Пĕр кун, акă, уйри капанран клевер утине турттарнă. Кашни лавран пĕрер пăта яхăн утă выльăхсен фермине кĕмен. Ăна вăрласа хăварнă. Колхозăн ревизи комиссийĕ ĕçлемест. Çакăн пек çитменлĕхсене курать пулсан та, вăл нимĕнле мера та йышăнмасть. Комисси 1942 çулти тупăшпа шута илме халĕ те тытăнман-ха.

КОЛХОЗНИКСЕМ.

Ют çĕршывсенче

«ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ÇĔНТЕРМЕЛЛИ НИКĔСЕ 1942 ÇУЛТА ХЫВНĂ»

Америкăри пичет Хĕрлĕ Çарăн çапăçури çитĕнĕвĕсем çинчен

Совет войскисем Сталинград патĕнче ултă эрне хушши наступлени туни итогĕсем çинчен пĕлтернисене Америкăри пур хаçатсем те пĕррĕмĕш страницăсенче шултăра заголовоксемпе пичетлесе кăларнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат хăйĕн заголовокĕнче: Совет войскисем Германин 22 дивизине ункăна хупса лартнине тата Сталинград патне пымалли вырăнсенчи çапăçусенче нимĕçсен 312.650 çын пĕтнине кăтартса парать. Çав хаçатах Хĕрлĕ Çар чаçĕсем наступлени туни виçĕ тапхăрне кăтартса пыракан пысăк картăпа пичетлесе кăларнă.

Çавăн пекех Америкăри пичет совет войскисем Великие Луки хулине чугунçул узелне йышăнса илни çинчен пĕлтернине те пысăк вырăн парса çырать. «Нью-Йорк таймс» хаçат Великие Луки питех те паха база пулса тăнине палăртать. Хĕрлĕ Çарăн çапăçури çитĕнĕвĕсем çинчен пĕлтернине çавăн пекех Америкăри радио та пысăк вырăн парать. Радиообозреватель Брук Темплл çапла çырать: гитлерла Германие çĕнтермелли никĕсе 1942 çулта хывнă. Нимĕçсен питех те пысăк çарне Сталинград районĕнче çавăрса илсе пĕтерсе пыраççĕ. «Тĕнĕл держависене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пысăк инкексем кĕтеççĕ», тесе çырать обозреватель. (ТАСС).

«ХĔРЛĔ ÇАРĂН ИНКĔЛМИ ÇИРĔПЛĔХĔ»

Англири пичет Совет войскисем Сталинград патне пымалли вырăнсенче ултă эрне хушши наступлени туни çинчен

Совет войскисем Сталинград патне пымалли вырăнсенче ултă эрне хушши наступлени туни итогĕсем çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернине Англири хаçатсем пĕррĕмĕш страницăсенче чи курăнмалла вырăнта пичетлесе кăларнă.

Çавăн пекех пичетпе радио совет войскисем Великие Луки хулине чугунçул узелне йышăнса илни çинчен те анлăн çутатса параççĕ.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: 1943 çулта нимĕçсене çĕнтерессине шанса тăма пысăк сăлтавсем пур. Чи малтанах çавăн пек шанчăксен никĕсĕ — совет войскисен çапăçури çитĕнĕвĕсем пулса тăраççĕ.

Çав хаçатăн умстатьинче çакна палăртнă: «Совет войскисен наступленине питех те лайăх организациленĕ, операцисене палăртса хатĕрлес тата палăртнă плансене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе вырăссем пысăк çирĕплĕх кăтартаççĕ. Çакă вăл Черчилль премьер Сталина богатырла çулпуç тесе панă характеристика тĕрĕс пулнине татах та тепĕр хут кăтартса парать. Вырăссене тивĕçлĕ хак памалла, вĕсем вăрçăн тĕп йывăрлăхĕсене иртнĕ çулта хăйсем çинче тÿссе ирттерчĕç. 1942 çулта тĕлĕнсе савăнни, çумне 1943 çулта вырăссемпе ăмăртасси хутшăнать», тенĕ.

АФИ агентстви çапла çырать: совет войскисем Великие Луки хулине йышăнса илни питех те паха фактор пулса тăрать, мĕншĕн тесен Великие Луки нимĕçсемшĕн чылай вăхăт хушши пысăк вырăн йышăнса тăнă. Великие Луки хулине тытса илни нимĕçсен коммуникацийĕсене пысăк хăрушлăх кÿрет. (ТАСС).

—⊙—

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркассинчи вăтам шкул çумĕнчи ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕ лайăх ĕçлет. Унта çак кунсенче 6 вĕренекене комсомол ретне илнĕ, вĕсенчен 3-шĕ—хĕрачасем. Çĕнĕрен илнĕ комсомолецсемпе комсомолкăсем вĕренÿре малта пыраççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Çамрăк патриотсем

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Хулари 1-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пĕр кун хушшинче 5 пин те 700 тенкĕ пухса панă. Рейторовская юлташ руководитель пулса ертсе пыракан 7-мĕш «Б» класс кăна танксен колоннине тума 600 тенкĕ пухнă. Çамрăк патриотсем Хĕрлĕ Çар валли хăватлă танксем тума хăйсем перекетленĕ укçана параççĕ. Вĕренекенсем: Лия Григорьева, Тамара Горбаченко, Николай Кляцкин, Альбина Спиридонова танксен колоннине тума 100-шер тенкĕ панă.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа парас ĕçе хулари тата районри шкулсенче вĕренекенсем те активлăн хутшăннă. Хулари 3-мĕш номерлĕ вăтам шкул танксен колоннине тума 2 пин те 650 тенкĕ, Анат-Кăмашари туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 5 пин тенкĕ хывнă.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. СОВЕТ ÇУРÇĔРНЕ ХÿТĔЛЕТПĔР

Эпир хамăрăн тăван республикăран питех те инçетре тăратпăр. Совет Çурçĕрне, ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те паттăррăн хÿтĕлеççĕ.

Баренц тинĕсĕ, Мурманск хули,—ку вăл—пирĕн союзниксемпе çыхăнмалли хапха. Сĕмсĕр нимĕç çав хапха патнелле пĕр утăм та пыраймасть. Нимĕçсен карапĕсем Баренц тинĕсĕнче кун кураймаççĕ. Çурçĕрти таса сывлăшра нимĕç çăханĕсем ыррăн вĕçеймеççĕ. Вĕсене пирĕн моряксемпе паттăр соколсем çийĕнчех çапа-çапа антараççĕ, пулăсем валли апатлăх тинĕс тĕпне ăсатаççĕ.

Çурçĕрти боецсем аслă наркомăн Сталин юлташăн приказне лайăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Эпир вăрçă техникине отлично вĕрентетпĕр. Нимĕç пирĕн алăран вĕçерĕнеймест. Эпир вĕсене тĕл пулнă пеккипе кашнинех вĕлеретпĕр. Эпир Çурçĕрте вĕлернĕ нимĕç кăнтăрта чĕрĕлсе тăрса пирĕн юратнă çĕршыв çине текех тапăнас çук. Эпир паян вĕлернĕ нимĕç ыран пирĕн çине «шмайсертан» пемест, вăл текех ват çынсемпе ачасене вĕлерейместь, пирĕн савнă хĕрĕмĕрсене пусмăрлаймасть.

Пирĕн пурăнас килет, пурнăç хаклă. Анчах пуринчен те хаклăраххи—Тăван çĕршыв, пире пăхса çитĕнтернĕ, пире телей панă çĕршыв. Çавăнпа та эпир тăван çĕршывăн пурнăçне хамăрăн пурнăçа хĕрхенмесĕр хÿтĕлетпĕр, унăн тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр вĕлерсе пĕтеретпĕр. Паянхи кун пурăнас килсен, нимĕçе вĕлерес пулать. Паян эсĕ нимĕçе вĕлеретĕн — эсĕ пурăнатăн. Паян эсĕ нимĕçе вĕлермерĕн—вăл сана вĕлерет. Çавăнпа пурăнассу килсен—вĕлер нимĕçе. Çакăн пек пирĕн закон, Совет Çурçĕрне сыхлакан моряксен, Хĕрлĕ Çар воинĕсен законĕ.

Эпир сиртен инçетре пурăнатпăр. Çапах та тăван халăх тылра тунă çитĕнÿсем çинчен лайăх пĕлсе тăратпăр. Пирĕн халăхăн çитĕнĕвĕ, тетпĕр вара эпир, Чăваш çĕршывĕ тунă çитĕнÿсем çинчен пĕлсен.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, чăваш комсомолецĕсемпе çамрăкĕсем, фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче мĕнпур вăй-халпа ĕçлĕр. Пĕтĕм вăя тăшмана çапса аркатнă çĕре парăр. Фронтшăн нимĕн те хĕрхенсе ан тăрăр.

Часах эпир кĕтнĕ сехет—çĕнтерÿ сехечĕ çитет. Унчухне эпир Тăван республикăна таврăнса, пĕр-пĕрне ыталăпăр, хамăр тунă çĕнтерÿсемпе паттăрсем çинчен каласăпăр. Çав куна сывхартассишĕн татах та паттăрранрах кĕрешĕр.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем, медаленосецсем: сержант П. А КУЛЫГИН, кĕçĕн командир П. Н. ПИКАЕВ, старши сержант Ç. ЖЕЛУДКИН.

2. МИНОМЕТЧИКСЕМ-СНАЙПЕРСЕМ

Фронтовиксем хушшинче снайперла перекенсен движенийĕ анлăн сарăлса кайрĕ. Эпир те, чăваш боецĕсем, хамăрăн подразделенире миномётăн снайперла расчетне тăвас задача лартрăмăр. Эпир ытти подразделенисемпе ăмăртăва тухрăмăр.

Ăмăртура пирĕн икĕ расчет мала тухрĕ, вĕсем снайперла расчетсем пулса тăчĕç. Паян кунччен вĕсем нумай паха ĕçсем турĕç.

Пирĕн разведка тăшман патне фрицсене тĕрĕлле тытма шăвăнать. Сылтăм енчен тăшман пулеметран асар-писеррĕн персе тăрать. Эпир часах икĕ минометран пĕрер мина кăларса ятăмăр. Ирсĕр фрицсемшĕн урăх кирлех те пулмарĕ. Çав пирвайхи минăсемех тăшманăн пулеметне расчечĕпе пĕрлех стройран кăларчĕç. Çав кун эпир кĕске вăхăт хушшинчех нимĕçсен виçĕ миномет расчетне «çÿлти патшалăха» ăсатрăмăр. Пире командовани тав турĕ. Пирĕн счет ÿссех пырать. Эпир ĕнтĕ пĕтĕмпе фрицсен пĕр взводне, 4 дзотне, юрудин пĕр расчетне тата тепĕр пулемет расчетне пĕтерсе тăкрăмăр.

Нимĕçсене вĕлермен кунсем сайра пулаççĕ. Эпир вăрçă ĕçне вĕренсе лайăх хăнăхса çитнĕ пирки, тăшман пире стройран кăларма темĕн пек тăрăшать пулин те, эпир хамăра стройран кăлармa памастпăр.

Эпир малалла наступлени тăватпăр. Тăшмана çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма памастпăр, ăна хыçранах йĕрлесе, хăваласа пыратпăр.

Эпир кĕтекен уяв пирĕн урамра часах пулĕ.

Лейтенант Г. ЧИЖОВ, Боецсем: И. ВАСИЛЬЕВ, В. НИКОЛАЕВ, П. НИКОЛАЕВ, Г. КРАСНОВ, В. СЕРГЕЕВ, ИВАНОВ.

3. ХАМĂРĂН ВĂРÇĂРИ ĂСТАЛĂХА ÿСТЕРЕТПĔР

Эпир, Н-ски чаçри боецсем, хамăр умма пур тĕрлĕ хĕçпăшала та тĕплĕн вĕренсе çитес задача лартрăмăр. Кунта пирĕн чăваш боецĕсем 20 çынна яхăн. Пĕр-пĕр ăнланмалла ыйту тухсан, пире хамăр чăваш командирĕсем тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Çавăн пек пирĕн командирсенчен Вăрмар районĕнчен килнĕ Богатынов тата Васильев юлташсем питĕ тăрăшса вĕрентрĕç.

Эпир, чăваш халăхĕн ывăлĕсем, тăван халăхăн ятне çÿлте тытма тăрăшатпăр. Пирĕн чаçра хамăрăн хаçат пур. Унта яланах пирĕн чăваш боецĕсем çар ĕçне лайăх вĕренсе пыни çинчен çыраççĕ. Эпĕ хам çарта—иккĕмĕш çул, пĕр хутчен вăрçа кайса килтĕм. Халĕ татах фронта тухса кайма хатĕр. Пире лайăх тумлантарнă, паха хĕçпăшалсем панă. Çакăншăн эпĕ правительствăна тата Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлине пурне те хатĕрлекен тылри ĕççыннисене тав тăватăп. Эпир фронта ирсĕр нимĕçсене çĕнтерес хастарлăхпа тухса каятпăр.

Красноармеец И. СТЕПАНОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 604 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.